42-68
3329/80
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ ...ры в количестве 5 экземпляров получены 15. VIII 1942
Подп... Ваке

П. Г. ГРИГОРЬЕВ



# МИНИНПА ПОЖАРСКИЙ

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1942

Ҫак брошюрăра автор вырăс халăхĕ XVII-мĕш ĕмĕрте, Кузьма Минин тата Димитрий Пожарский ертсе пынипе, ютҫĕршыв захватчикĕсене хирĕҫ паттăрăн ҫапăҫни ҫинчен каласа парать.

Хальхи Аслă отечественнăй вăрҫăри пекех ун чухне те вырăс халăхĕ хăйĕн тăван ҫĕршывĕн чысĕшĕн, хисепĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫнă.

Брошюра К. Мининпа Д. Пожарскин пурнăҫĕсемпе те кĕскен паллаштарать. Ҫул майăн автор Атăл тăрăхĕнчи вак халăхсем, вăл шутра чăвашсем те, халăх ополченине хутшăнса кĕрешни ҫинчен историллĕ материалсемпе кĕскен паллаштарать.

Брошюрăна массăллă вулакансем валли ҫырнă.






Аслă вырăс халăхĕн паттăр кĕрешĕвĕсенче XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче ютçĕршывсен интервенцине хирĕç кĕрешни уйрăм вырăн йышăнса тăрать. 1604 — 1612 çулсенче пирĕн тăван çĕршыв, вырăс халăхĕ хăйĕн историйĕнчи питех те йывăр кунçулĕсене пурăнса ирттернĕ.

1604 — 1612 çулсенче вырăс государстви çине Хĕвеланăç енчен поляксемпе шведсен интервенчĕсем тапăннă, — вĕсене поляксен королĕ патĕнче службăра тăракан ландскнехтсемпе рейтарсем тата нимĕçсен çар çыннисем ĕшкĕртсе тăнă. Патшана ларасшăн пулса пĕр-пĕринпе харкашакан вырăс боярĕсен хирĕçĕвĕсемпе усă курса, тĕрлĕ провокацисемпе, чеелĕхсемпе вырăс государствине вăйсăрлатса пырса, 1604 çулта ютçĕршыв захватчикĕсем Польшăра пысăк çар пухса вырăс çĕршывне килсе кĕреççĕ. Вĕсем вырăс çĕршывне хăйсен аллине туртса илсе вырăс халăхне пăхăнтарас тĕп шухăша халăх куçĕ умĕнче пытарса тăрас шутпа, вырăс патши вырăнне I-мĕш Суя

Димитрине сённӗ. Анчах вӗсем ҫакӑн пек хӑтланнинчен нимӗн ӗҫ те тухман. Вырӑс халӑхӗ ютҫӗршыв захватчикӗсене кирлӗ пек отпор панӑ. Ҫапла вара ютҫӗршыв захватчикӗсем I-мӗш Суя Димитрий урлӑ пирӗн ҫӗршыва туртса илес авантюра, 1605 ҫулта Мускаврa захватчиксене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ хыҫҫӑн, вӑхӑтлӑха путланса ларнӑ. Анчах ҫакӑн хыҫҫӑн та ютҫӗршыв интервенчӗсем вырӑс государстви ҫине ҫӗнӗрен хӗҫпӑшаллӑ вӑйсем ярса вырӑс ҫӗрӗсене туртса илес шухӑша пӑрахман.

XVII-мӗш ӗмӗр пуҫламӑшӗнче вырӑс государстви экономикӑллӑ йывӑр кризис тӳссе ирттернӗ. Экономикӑллӑ кризиса ҫӗршывра вӑйланса пыракан социальнӑй тата политикӑллӑ кризис тата ытларах йывӑрлатнӑ. 1600—1603 ҫулсенче тырӑ пулман пирки ҫӗршывра пысӑк выҫлӑх килсе тухнӑ. Хресченсем час-часах хырҫӑсем тӳлеме пултарайман, «тумтирсем ҫӗтӗлсе пӗтрӗҫ, арӑмсемпе ачасене заклада хурса пӗтертӗмӗр, халӗ ӗнтӗ, выҫӑ вилетпӗр», тесе тарӑхнӑ.

Хресченсене помещик-феодалсем, боярсем т. ыт. те хытӑ эксплоатациленӗ. Ҫакна пула, хресченсем улпутсем патӗнчен тарма пуҫланӑ. Нумай саласемпе ялсем йӑлтах пушанса юлнӑ. Борис Годунов правительстви, ун хыҫҫӑн тата Шуйский правительстви «таркӑн» хресченсем пирки законсем кӑларса, хресченсене помещиксем сумне ҫирӗплетнӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн хресченсем помещиксене, боярсене пушшех курайми пулса ҫитнӗ.

Хуласенчи посадски ҫынсене, ремесленниксемпе

кустарьсене те феодалла эксплоатаци хытă пусмăрлама пуçланă.

Çĕршывра хресченсен восстанийĕсем ÿссе пынă. 1604 — 1606 çулсенче çак восстанисем уйрăмăнах вăйланса çитнĕ. Хресченсен çак тапхăрти восстанийĕсенчен чи пысăкраххи — Иван Болотников ертсе пыракан восстани пулнă. Болотников восстанине Калуга, Тула, Рязань, Смоленск çавăн пекех тата Атăл тăрăхĕнчи хресченсем хутшăннă. Анчах та феодальнăй саманари восстанисем стихийлă та сапаланчăк пулнă пирки хресченсен пурнăçне улăштарма пултарайман. Хресченсен восстанисене правительство хыттăн путарса лартнă.

Хресченсен восстанийĕсемпе пĕр вăхăтрах çак тапхăрта пуян боярсем хушшинче Борис Годунов патшана хирĕç заговорсем пуçланса кайнă. Борис Годунов хăй курайман боярсене хытă хĕсĕрлеме тытăннă.

Ютçĕршыв захватчикĕсем вырăс государствинче пулса иртекен событисене тимлĕн асăрхаса тăнă. Боярсем патшана хирĕç кĕрешнипе усă курса, вĕсем вырăс государствин çĕрĕсене хăвăртрах туртса илме, вырăс халăхне чуралантарма ĕмĕтленнĕ.

Ютçĕршыв интервенчĕсене вырăс государствин пуянлăхĕсем илĕртсе тăнă. Англи королевин— Елизаветăн посолĕ Флетчер, XVI ĕмĕр вĕçĕнче Российăра пулса, Россия çинчен çапла çырнă: «Этемсене Российăри пек çав тери пархатар пурнăç паракан çĕр сахал. Вĕçĕ-хĕррисĕр тÿремсенче

тыр кашласа ӳсет... Тырпул вăйлă пулнă пирки унăн хакĕ йӳнĕ... Тырăпа ытти çимĕçсем шалти суту-илӳре паллă вырăн йышăнса тăраççĕ, тулашри суту-илӳ валли россиясен: 1) тирсем, 2) ăвăс, 3) пыл, 4) сало, 5) сăрăн, 6) ворвань е пулă çăвĕ, 7) вăлча, 8) йĕтĕн-сӳс, 9) тăвар, 10) тикĕт, 11) пулă шăлĕсем, 12) смала, 13) селитрапа кӳкĕрт, 14) тимĕр... т. ыт. те пур».

Ютçĕршыв захватчикĕсем пуринчен ытла вырăс государствинче шалти хирĕçӳсене çивĕчлетсе яма тăрăшнă. Кремльре вĕлернĕ I-мĕш Суя Димитрий хыççăн тепĕр Суя Димитрий сиксе тухать, вырăс халăхĕ ăна «Тушински вăрă» тесе ят панă. Ун хыçĕнче те ютçĕршыв захватчикĕсемех тăнă.

1610 çулта Василий Шуйский ятлă патшана вырăнтан кăларнă хыççăн, çĕршывра власть «Боярская Дума» аллине кĕрсе ӳкнĕ; Думăна çичĕ боярин: Ф. Мстиславский, Ф. Шереметьев т. ыт. те кĕнĕ. Çак сутăнчăк боярсем ку вăхăт тĕлне «Тушински вăрă» тавра пĕрлешсе тăнă. Вĕсем ютçĕршыв интервенчĕсемпе пĕрле вырăс халăхне чуралантармалли план хатĕрленĕ. Боярсен сутăнчăклăхне пула, интервентсем 1610 çулта Мускав хулине тытса илнĕ.

Вырăс халăхĕ çак тапхăрта нихçанхинчен те йывăр тапхăр пурăнса ирттернĕ. Вырăс çарне тăшмансем çапса çĕмĕрнĕ; Шуйский хыççăнхи правительство, «çичĕ боярлă дума», йăлтах ютçĕршыв интервенчĕсене майлă ĕçленĕ. Интервентсен уйрăм отрячĕсем пĕтĕм çĕршыв тăрăх асса çӳ-

ренӗ, хуласене, ялсене ҫунтарнӑ, халӑха пусмӑрланӑ, ҫаратнӑ.

Ютҫӗршыв захватчикӗсем вырӑс халӑхне пусмӑрласси, мӑшкӑл тӑвасси 1610 — 1612 ҫулсенче, Мускав хулине тата ытти чылай хуласене туртса илнӗ хыҫҫӑн уйрӑмӑнах вӑйланнӑ. Вӗсем, малтанах каларӑмӑр-ха, ялсене ҫеҫ мар, хуласене те ҫунтара-ҫунтара янӑ. Ҫак тапхӑрта ӗнтӗ вӗсем Орел, Болхов, Алексин хулисене ҫунтарса янӑ. Ютҫӗршыв захватчикӗсем вырӑс халӑхӗн йӑлисене мӑшкӑл тунӑ, культурӑпа тӗн пуянлӑхӗсене ҫӗмӗрсе пӗтернӗ.

Вырӑс ҫӗршывӗнче пур ҫӗрте те макӑру, кӑшкӑрашу сасси уласа тӑнӑ. Вӑл—асап куракансен, ҫарату тӳсекенсен, мӑшкӑл куракансен, выҫӑ ларакан ҫӗршер пин вырӑс хресченӗсен сасси пулнӑ.

Мускав ҫулӗ ҫинче ларакан хуласем нумайӑшӗ — Смоленск, Дорогобуж, Вязьма т. ыт. те интервентсен ҫарӗсене хирӗҫ хытӑ ҫапӑҫнӑ. Смоленск ҫыннисем ютҫӗршыв интервенчӗсен нумай йышлӑ ҫарӗн атакисене геройла арката-арката тӑкнӑ. Анчах та 1611 ҫулта, икӗ ҫулталӑка яхӑн тӑшманран хӳтӗленсе тӑнӑ хыҫҫӑн, Смоленск тӑшман аллине кӗрсе ӳкнӗ.

Смоленск, Дорогобуж ҫыннисем каярахпа Мускав хулине тата пӗтӗм вырӑс государствине ирӗке кӑларассишӗн Чулхула ополченийӗ ҫумне хутшӑнса паттӑрӑн кӗрешнӗ.

Пӗтӗм ҫӗршывӗпе партизансен — хресченсен движенийӗ сарӑлса кайнӑ. 1611 пуҫламӑшӗнче пирвайхи земски ополчени пуҫӑнса кайнӑ. Вырӑс

халăхĕ хăйĕн тăван çĕршыв чысĕшĕн, хăйĕн государствин ĕçĕшĕн хытă тăнă. Захватчиксене хирĕç кĕрешесси тем пек йывăр пулнă пулсан та, вырăс халăхĕ хĕçпăшала алăран яман, хăйĕн тăван çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăрăн, хăюллăн çапăçнă.

1611 çулта вырăс государствин положенийĕ пушшех йывăрланса çитнĕ; шведсем, ку таранччен Василий Шуйский патша союзникĕсем пулнăскерсем, халĕ ĕнтĕ уççăнах интервенци çулĕ çине тăнă. 1611 çулти июлĕн 16-мĕшĕнче шведсем Новгород хулине тытса илнĕ. Вĕсем вырăс çĕршывĕсем çине тата ытларах шалалла кĕме хатĕрленнĕ. Ĕçсем тата ак мĕн пирки пушшех йывăрланса çитнĕ: пирвайхи земски ополчени 1611 çулти июнĕн пуçламăшĕнче саланса кайма тытăннă, мĕншĕн тесен вăл ополченире, тĕпрен илсен, дворянсем тата казаксен пуян сийĕсем тăнă. Земски ополчени пуçĕнче Трубецкой, Заруцкий т. ыт. князьсем тăнă пулнă.

Вырăс государстви пысăк хăрушлăх умне тухса тăнă: çĕршыва йĕри тавра ютçĕршыв интервенчĕсем хупăрласа илнĕ, çав вăхăтрах Мускавра, çĕршыв столицинче, интервентсемпе сутăнчăк боярсем ларнă. Çапла ĕнтĕ, тăшмансен енче вăй сахалах пулман: вĕсен лайăх хĕçпăшалланнă çар пулнă, опытлă полководецсем пулнă, артиллери, туртса илнĕ вырăс крепоçĕсем, хулисем пулнă, вĕсем енчех сутăнчăк боярсем пулнă. Государство тытăмĕ шăпах та çав боярсен аллинче тăнă ĕнтĕ.

Россия территорийĕ çине ютçĕршыв захватчикĕ-



сем килсе кени, вӗсем вырӑс халӑхне пусмӑрлани, ҫаратни — халӑха питех те тарӑхтарса ҫитернӗ, унӑн ӗмӗрхи нациллӗ туйӑмлӑхне вӑратнӑ, захватчиксемпе сутӑнчӑк боярсене курайми туса ҫитернӗ. Ҫавӑн пек хӑрушӑ самантра, ҫӗршыва интервентсем ҫаратса юхӑнтарнӑ, мӑшкӑл тунӑ, унӑн чысне таптанӑ самантра, ҫӗршыв ӑшчиккинче пысӑк хирӗҫӳсем пулнӑ самантра, тӗп правительство та, хысна та, ҫар та пулман самантра— тӑван ҫӗршыва хӳтӗлемешкӗн халӑхӑн сарлака массисем сиксе тӑнӑ. Халӑх хушшинчен ӑна ертсе пыракансем те, хӗрӳллӗ патриотсем, тӳрӗ шухӑш-кӑмӑллӑ, хӑюллӑ ҫынсем — Мининпа Пожарский тухнӑ.

Интервентсем вырӑс государствинчи пусмӑр тӳсекен халӑха вӗҫӗмсӗр эксплоатацилени, тискер майсемпе асаплантарнӑ, унӑн тӗнӗнчен мӑшкӑланӑ, унӑн нациллӗхне пусмӑрланӑ. Ҫавӑнпа та, посадски тата служилӑй ҫынсем ҫеҫ мар, хулари чухӑнсем те, хресченсем те интервентсене ҫӗмӗрсе тӑкас, тӑван ҫӗршыва ирӗке кӑларас ӗҫе малти вырӑна хунӑ. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ вырӑссен иккӗмӗш ополченине, вырӑс халӑхӗн историйӗне «Чулхула ополченийӗ» ятпа кӗрсе юлнӑ ополченине пӗтӗм халӑх кӑмӑлтан хапӑл туса йышӑннӑ, ӑна пулӑшу панӑ, партизансен — хресченсен отрячӗсем хӗҫпӑшаллӑ вӑйпа пулӑшса тӑнӑ. Иккӗмӗш ополчени чӑн-чӑн халӑх ополченийӗ пулса тӑнӑ, унта тӗрлӗ специальноҫлӑ воинсем — пушкарьсем, стрелецсем т. ыт. те пулнӑ, унта тӗрлӗ нациллӗ халӑхсен—тутарсен, чӑвашсен, мордвасен т. ыт. халӑхсен служилӑй ҫыннисем нумай пулнӑ. Пуринчен ытла ополченире вырӑс халӑхӗн посадски ҫыннисем тата хресчен ҫыннисем пулнӑ.

Халӑх хӑйӗн улӑпла вӑйӗ ҫине шаннӑ. Ҫакӑн ҫинчен 1610—1611 ҫулсенчи пӗр документ питӗ уҫҫӑн кӑтартса парать, вӑл документӑн ячӗ «Чаплӑ вырӑс патшалӑхӗ ҫинчен ҫӗнӗ повесть». Ҫав документра Смоленск хулине хӳтӗлекенсен паттӑрлӑхне мухтанӑ, вӗсенчен пример илме чӗнсе каланӑ, сутӑнчӑксене питлени, юлашкинчен ҫапла каланӑ: «Киревсӗр тата хӗнхур тӳссе пурӑниччен, паттӑр вилӗмпе вилни аванрах».

Интервентсене вырӑс государствинчен хӑваласа кӑларассишӗн тата Мускава ирӗке кӑларассишӗн

халăхăн вăйлă движенийĕ Тури Атăлпа Вăтам Атăлри хуласенче пуçланса кайнă. Çав ыйтупа 1611 çул пуçламăшĕнчех Российăн чылай хулисем пĕр-пĕринпе сăмах татма тытăннă: «пĕр-пĕрне пулăшăпăр, пĕр-пĕриншĕн вилĕпĕр»,—тесе çирĕп сăмах панă вĕсем. Ютçĕршыв захватчикĕсене хирĕç «пĕтĕм халăхпа» çĕкленсе тухма чĕнекен сăмахсем вырăс государствин пур кĕтессисенчен те килсе тăнă: Угличран, Вологдаран, Ярославльран, Мускавăн леш енчи чикĕсенчи хулисенчен. Çав вăхăтрах, Атăл тăрăхĕнчи хуласене те: Чулхулара, Владимирта, Хусанта, Шупашкарта, Пермьра т. ыт. хуласене те ютçĕршыв захватчикĕсене, сутăнчăк боярсене хирĕç пĕр-харăссăн тухма чĕнсе грамотăсем салатнă. Халăх движенийĕ питĕ хăвăрттăн сарăлса, вăйлăланса пынă. Вырăс çĕрĕшĕн пурте пĕр çын пек тăмалла, тесе чĕнекен грамотăсене Мускавран, Троицко-Сергиевски лаврăран нумай çырса салатнă.

1611 çул пуçламăшĕнче тăшман хупăрласа илнĕ Смоленск хулинчен Атăл тăрăхĕнчи нумай хуласене грамота янă. Грамотăра çапла çырнă: «пурте çакна пĕлсе тăччĕр; халĕ ирĕклĕ чухне, чуралăха кĕрсе ӳкмен чухне, тыткăна илсе кайман чухне чăн тĕншĕн пĕтĕм çĕршыв сиксе тăмалла».

Çавăн пек грамотăсенех, малтанах каларăмăр-ха, Мускавран тата Троицко-Сергиевски лаврăран нумай ярса тăнă. Çавăн пек грамотăсенчен пĕрине Чулхулара та илнĕ.

Россия варринче юхса выртакан икĕ пысăк шыв—Атăлпа Ока—пĕрлешнĕ çĕрте ларакан Чулхула

вăйлă суту-илÿ центрĕ пулнă. XVII-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕ тĕлне Чулхулара посадски çынсем йышлăн пулнă. Ока шывĕ Чулхулана тырăллă Рязань çĕршывĕпе çыхăнтарнă, Коломнаран турарахра юхса иртекен Мускав шывĕ Чулхулана Мускав хулипе çыхăнтарнă. Çав вăхăтрах тата Чулхуларан Мускава тип çулпа та, Муром, Владимир, Суздаль хулисем витĕр, çÿренĕ. Чулхуларан тăвэлла, Ярославль тата ытти хуласене каяс пулсан, Атăл çулĕ чи лайăх çул пулнă. Ярославль хулине Чулхуларан типĕ çулпа та кайма пулнă, уйрăмах хĕл кунĕсенче лайăх çул пулнă. Ку çул Атăлăн сылтăм енĕпе пынă, вăл Костромаран иртсен тин Атăлăн сулахай енĕпе кайнă. Чулхуларан Хусана каймалли хĕллехи çул та пулнă, вăл çул Атăл çыранĕнчен кăшт пăрănса, Лысково, Васильсурск, Шупашкар, Сĕве хулисем витĕр выртнă. XVII ĕмĕр пуçламăшĕ тĕлне Чулхула Яранскпа Котельнич хулисем урлă Вятка çĕршывĕсемпе, аслă Пермьпа тата Инçет-Çĕпĕрпе те çыхăнса тăнă.

Чулхулана XVII-мĕш ĕмĕрте пур енчен те кимĕсемпе, лавсемпе тĕрлĕрен таварсем пырса тăнă: Рязань çĕршывĕнчен тата Ока шывĕ тăрăхĕнчи ытти вырăнсенчен—тырă илсе пынă, Мускавпа Ярославль хулисенчен—хĕвеланăçĕнчен турттарса килнĕ таварсем пынă, çак хуласенченех тата ыттисенчен те—хĕвеланăç енчерехрисенчен—вырăс таварĕсем: йывăçран, сăранран тунă таварсем илсе пынă; Хусантан, уйрăмах Астраханьрен—Бухара, Перси, Инди таварĕсем (Персия урлă) пынă. Астраханьрен—тăвар, пулă, вăлчă пынă, Вяткăран,

Пермьран, Çĕпĕртен — хаклă йышши тирсем, Пермьранах тата тăвар пынă. Çавăн пирки те XVII-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Чулхула ун чухнехи суту-илĕвĕн чи пысăк передаточнăй пункчĕ пулса тăнă; кунта кимĕсене пушатнă—тиенĕ, часчасах тата пысăк кимĕсенчен пĕчĕкреххисем, ăшăхраххисем çине куçарса тиенĕ. Çавăнпа та кунта посадски çынсем—работнăй çынсем, бурлаксем, суту-илў тăвакансем нумай пураннă.

Тепĕр енчен тата Чулхула 1605—1611 çулсенче пулса иртнĕ событисене хутшăнмасăр юлнă. Чăнах та, «Тушински вăрă» хыççăн кайма хатĕр çынсем кунта та пăч-пач пулкаланă. Анчах, апла пулсан та, Чулхула хăвăрттăн аталанса пынă, Российăн нумай хулисемпе нихăш хуларан та аванрах çыхăнса тăнă. Çак сăлтавсем пурĕш те пĕрле, паллах, XVII-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Чулхулана уйрăмах паллă вырăна кăларса тăратнă.

Вырăс государствине ютçĕр захватчикĕсен пусмăрĕнчен хăтарнă халăх ополченин пуçĕнче Тури Атăл çинчи хуласемпе пĕрле Чулхула тănă. Ополченине пуçарса яракан организатор Чулхула çынни Кузьма Минин пулнă.

Посадски çынсем Минина лайăх палланă, ăна хисепленĕ. «Вăл чаплă ăруранах тухман, анчах унăн ăсĕ-пуçĕ пысăк», тенĕ халăх. Мининăн уçă ăстăнне, унăн тўрĕллĕхне кура, посадски çынсем ăна хытă шаннă, ăна темиçе хутчен те земски старостана суйланă. Вăл саманара пураннă çынсем калана тăрăх, «Минин ытла пуянах пулман,

суту-илӳ юлташлӑхӗнче те унӑн укҫа 300 тенкӗрен иртмен».

1611 ҫулти сентябрь уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче Минин Чулхулари посадски ҫынсен пӗрлехи пухӑвӗнче, собор умӗнче, сӑмах тухса каланӑ. Вӑл тӑван ҫӗршыва захватчиксенчен тасатма чӗннӗ. Вӑл ҫак ӗҫшӗн нимӗне те шеллемелле мар: хамӑра та, пурлӑхсене те, арӑмсемпе ачасене те шеллемелле мар, тесе чӗннӗ. Халӑх умне тухса Минин: «Чӑн тӗне тытакан ҫынсем, Мускав государствине пулӑшас тетпӗр пулсан, хамӑр пурнӑҫа та шеллемӗпӗр, пурнӑҫа кӑна мар, хамӑр килҫуртсене, арӑмсене, ачасене заклада хурӑпӑр, пире ертсе пымашкӑн кама та пулин пуҫҫапсах йӑлӑнӑпӑр. Ку — пысӑк ӗҫ. Пире халӑх пулӑшсан, эпир вӑл ӗҫе тӑватпӑрах. Пирӗн хула пек пӗчӗк хуларанах ҫакӑн пек пысӑк ӗҫ пуҫланса каяс пулсан, вара вырӑс ҫӗршывӗ пире пурне те мӗн пек мухтава кӑларӗ; эпӗ лайӑх пӗлетӗп: эпир тапрансанах, пирӗн хыҫҫӑн ытти нумай хуласем те сиксе тӑрӗҫ, вара эпир ютҫӗршыв захватчикӗсенчен хӑтӑлӑпӑр». Ҫапла каланӑ Минин халӑх умӗнче. Халӑхӑн шухӑшӗсемпе кӑмӑлӗсене витӗр пӗлекен патриот кӑна ҫавӑн пек калама пултарнӑ. Ҫавӑнта пулнӑ пӗр ҫын каланӑ тӑрӑх, земски старостӑн ҫулӑмлӑ сӑмахӗсене итлекен халӑх макӑрса тӑнӑ.

Ютҫӗршыв захватчикӗсене чӗререн курайман, вӗсене вырӑс ҫӗршывӗнчен хӑваласа кӑларассишӗн ҫунса тӑракан граждансен ҫилли-пӑшшине Минин хӑйӗн ҫулӑмлӑ сӑмахӗсемпе тата ытларах



Кузьма Минин халăха ютçĕршыв захватчикĕсене хирĕç тухма чĕнет. *Моковский картинĕ.*

çулăмлантарса янă. Посадски çынсен земски сходĕнче вăл пысăк çар пухмашкăн укçа-тенкĕ пуçтарма сĕннĕ. Ку ĕçре те вăл пуринчен малтан халăха тĕслĕх кăтартнă. XVII-мĕш ĕмĕрĕн малтанхи çурма ĕмĕрĕнче пурăннă пĕр писатель каланă тăрăх, вăл «хăй килĕнче япала тавраш сахал хăварнă, хăйĕн пĕтĕм пурлăхне халăх умĕнче çар пухас ĕç валли панă».

Çак ĕçĕн малашлăхĕ пысăк пуласçине ăнланса, Минин Чулхула çыннисене пĕрлехи земски сходра «ополченине тĕреклĕ никĕс çинче пуçласа ярас» тесе «приговор» йышăнма сĕннĕ. Çавăн пек приговора посадски горожансем пĕр саслăн йышăнса, çапла каланă: «чăнлăхшăн пурте тӳрĕ шухăшлă пулăпăр, начальниксене пур çĕрте те пăхăнса, итлесе тăрăпăр, вĕсене нихăш енчен те хирĕçмĕпĕр; çар çыннисене шалу тӳлеме укçа памалла, укçа тупаймасан, пурлăхсене çеç пухмăпăр, кил-çуртсене, арăмсемпе ачасене заклада хурăпăр, сутăпăр, анчах çар çыннисене пурĕ пĕрех укçа тӳлесе тăмалла тăвăпăр, вĕсен нимĕнле çитменлĕх те ан пултăр».

Çакă ĕнтĕ ютçĕршыв захватчикĕсене хирĕç кĕрешме хĕçпăшаллă вăйсем организацилес ĕçе Минин мĕн пек пысăк вырăна хунине лайăх кăтартса парать.

Çапла ĕнтĕ, пирĕн çĕршыв çине килсе кĕнĕ ютçĕршыв захватчикĕсене хирĕç кĕрешĕве çĕкленнĕ аслă движени пуçĕнче Чулхула çыннисем пулнă, вĕсене хавхалантараканни, организацикеленни — Кузьма Минин пулнă.



XVII-мĕш ĕмĕр пуҫламăшĕнчи вырăс стрелецĕсем.

Халь те, пӗтӗм Совет халӑхӗ нимӗҫ фашисчӗсене хирӗҫ аслӑ отечественнӑй вӑрҫӑ вӑрҫакан кунсенче, Кузьма Минин Чулхула халӑхне ютҫӗршыв захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешме чӗнсе каланӑ сӑмахсем пире хавхалантарса тӑраҫҫӗ.

Минин сӑмахӗсем халӑх чӗринче тӑракан сӑмахсем пулнӑ, вӑл тухса калани пӗтӗм халӑха ҫӗклентерсе янӑ. Халӑх Минин чӗнсе каланине хирӗҫ: «Эсӗ пирӗн асли пулӑн, эпир хамӑра пӗтӗмпех санӑн ирӗкна парӑпӑр» тенӗ. Минин хӑйӗн сӑмахӗсемпе кашни вырӑс ҫыннин чӗрере тӑракан шухӑшӗсене пӗтӗм Руҫ умӗнче каланӑ. Тӑван ҫӗршыва халӑх хӑй кӑна ҫӑлма пултарассине Минин лайӑх пӗлсе тӑнӑ.

Минин куҫӗ умӗнчех халӑх хӑйӗн ҫар вӑйне — халӑх ополченине пухма тытӑннӑ, ополчени валли укҫа-тенкӗ, хаклӑ йышши япаласем пухнӑ, тупӑсем шӑратса тума, хӗҫсем, сӑнӑсем хатӗрлеме тытӑннӑ. Минин патриотсем валли пурин валли ӗҫ тупса панӑ.

Анчах ку ҫеҫ сахал-ха. Тата ҫар пуҫлӑхӗ — полководец кирлӗ пулнӑ, «вӑл тӳрӗ ҫын пултӑр, унталла-кунталла пӑркаланакан ҫын ан пултӑр» Ҫакӑн ҫинчен пӑртаках шутласа пӑхнӑ хыҫҫӑн халӑх, Минин сӗннипе, Димитрий Михайлович Пожарский князь кандидатури ҫинче чарӑнса тӑпӑ. Минин пекех Пожарский те тӑван ҫӗршывшӑн чӗререн тӑракан ҫын пулнӑ.

Самана ҫав тери улшӑнса тӑнӑ ҫулсенче хӑшпӗр князьсемпе боярсем, хӑйсен пуянлӑхӗсене сыхласа хӑварас шутпа, государствӑра пуҫпулса

тăрассине хăйсен аллинчех сыхласа хăварас ĕмĕтпе кирек-камшăн та тупа тума, кирек-кам патĕнче те службăра тăма хатĕр пулнă, вĕсемшĕн пулсан хăйсен пуянлăхĕсене, халăха эксплоатацилемелли правăсене сыхласа хăварасси пуринчен те маларах пулнă. Князь Димитрий Пожарский йăлтах урăхла çын пулнă. Вăл вырăс халăхĕн çўлти сийĕнчи çын пулнă пулин те, хăйĕн халăхне юратнă, уншăн хыпса çунакан çынсенчен сахалăшĕсенчен пĕри пулнă. Вăл хăйшĕн мар, обществăшăн, халăхшăн, государствăшăн тăрăшнă. Кузьма Минин хăюллă, çирĕп шухăшлă, вырăс халăх ĕçĕшĕн чĕререн тăракан çын пулнă пулсан, вăл тăван çĕршывшăн хăйĕн пурнăçне те пама хатĕр тăракан çын пулнă пулсан, Димитрий Пожарский хăюллă, ним пăркаланми çирĕп борец пулнă, вăл хăй юнне тăкса хăй халăхĕшĕн чĕререн тăнине, хăй аллине шанса панă хĕçпăшаллă вăйпа тăшмана çĕнтерме пултарнине кăтартнă.

Пожарский 1578 çулта çуралнă. Вăл Суздаль çĕршывĕнчи Стародубски князьсен авалхи, анчах та «чухăнланнă» йăрăвĕнчен тухнă, Всеволод Юрьевич йăхĕнчен çуралнă. Пожарский служба ĕçне Федор Иванович патша чухне стольник чинĕнчен пуçланă. Борис Годунов вăхăтĕнче Пожарский «стряпчий» пулнă. Василий Шуйский вăхăтĕнче вара вăл тĕрлĕ полксенче воевода пулса ĕçленĕ.

Пожарский талантлă та паттăр военачальник пулнă, Шуйский патша ăна 1608 çулта Коломнă-

на «Тушинский вӑрӑ» сыннисене хирӗҫ ҫапӑҫма пӗрремӗш воевода туса ярсан, вӑл тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Каярахпа Пожарский Мускав хулине ютҫӗршыв захватчикӗсем тапӑннинчен паттӑрӑн хӳтӗленӗ. Ҫапла тӳрӗ ӗҫленӗшӗн Шуйский патша Пожарскине вотчина парса наградӑланӑ. Наградӑпа пӗрле панӑ уйрӑм грамотӑра ҫапла ҫырнӑ: «Ӑна тӗрӗс службӑшӑн наградӑланӑ: Мускава тӑшмансем хупӑрласа илнӗ чухне, хурлӑхлӑ, чи кирлӗ тапхӑрта, вӑл тӑшмансене хирӗҫ ҫирӗп, хӑюллӑ кӗрешнӗ, нумай тӑрӑшнӑ, ҫитӗнӳсем тунӑ, выҫӑ тӳснӗ, тӗрлӗ ҫитменлӗхсене, осадӑри нушалӑха нумай вӑхӑт хушши ҫирӗп тӳссе ирттернӗ, вӑрӑ ӗҫне, смутӑна хутшӑнман, хӑйӗн тӑнпуҫӗпе ҫирӗп ӗҫленӗ, ниҫталла та пӑрӑнман». Курӑнать ӗнтӗ, ҫавӑн пек военачальнике суйласа, халӑх тӗрӗс тунӑ.

1610 ҫулти февраль уйӑхӗнчен пуҫласа Димитрий Пожарский Зарайск хулинче воеводӑра ларнӑ. Кунта унӑн Тушино самозванецне хирӗҫ ҫапӑҫма тӳрӗ килнӗ. 1611 ҫулти март уйӑхӗнче вӑл дворянсемпе казаксен пӗрремӗш ополченийӗнче тӑрса (ополченине Ляпунов ертсе пынӑ), ютҫӗршыв захватчикӗсене хирӗҫ малти ретре паттӑрӑн ҫапӑҫнӑ. Ҫак ҫапӑҫура ӑна ураран хытӑ амантнӑ. Аманнӑ Пожарскине Троицко-Сергиевски лаврӑна илсе кайнӑ, унтан вара вӑл хӑйӗн именине (Чулхуларан 120 ҫухрӑмра) кайса, хӑйӗн суранне сиплесе пурӑннӑ.

1611 ҫулти сентябрь уйӑхӗн варринче Пожарский патне Чулхуларан ятарласа янӑ посольство



Вырăс воинисен XVII-мĕш ĕмĕрти хĕçпăшалĕ.

пынă, ăна ютçĕршыв захватчикĕсене хирĕç тăракан халăх ополченине ертсе пыма ыйтнă.

Пожарский хăйне пысăка хурса турткаланса тăман, халăх ополчени пуçне тăма килĕшнĕ. «Сирĕн сĕнĕве эпĕ хавассăн йышăнатăп, — тесе от-

ветленӗ вӑл Чулхуларан пынӑ представительсене, — эпӗ халех тухса пыма хатӗр, анчах малтан эсир посадски ҫынсем хушшинчен ҫак аслӑ ӗҫре манпа пӗрле пулма тата хысна укҫи пуҫтарма пӗр ҫын суйласа лартӑр. Соловьев историк каланӑ тӑрӑх, Д. Пожарский ҫак ӗҫе кама суйласа лартассине те тӗллесе кӑтартнӑ. «Сирӗн Кузьма Минин пур, — тенӗ вӑл, — вӑл пурнӑҫа пӗлекен ҫын, ку ӗҫе вӑл ҫӑмӑллӑнах тума пултарать».

Пожарский воевода пулса ютҫӗршыв захватчикӗсене хирӗҫ темиҫе хутчен те ҫапӑҫса курнӑскер, ҫар валли укҫа пухма тата ҫара хӑйне организацилеме ӗҫе лайӑх пӗлекен ҫын кирлине аван пӗлсе тӑнӑ. Ҫавӑнпа та вӑл «ҫак аслӑ ӗҫӗн хуҫи» пулмашкӑн Минина суйлама сӗннӗ. Чулхула ҫыннисем хавассӑнах Кузьма Минина суйланӑ.

Минин, чӑн та, «пурӑнса курнӑ» ҫын пулнӑ. Ляпунов ертсе пыракан пӗрремӗш ополченинче пулнӑ чухне Минин Д. М. Пожарский отрядӗнче активлӑн ҫапӑҫнӑ. 1611 ҫулта вӗсем Мускавра интервентсене хирӗҫ кӗрешнӗ. Пирвайхи ополчени саланса кайсан Минин Чулхулана таврӑннӑ. Кунта вӑл обществӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе тата вӑйлӑрах сарса янӑ. Вӑл хӑйӗн тӑван ҫӗршывӗн тӳрӗ патриочӗ пулнӑ, уншӑн хыпса-ҫуннӑ. Вӑл тӑван ҫӗршывшӗн нимӗн те шеллемен, тӑван ҫӗршыва ютҫӗршыв интервенчӗсенчен хӑтарма тӑрӑшнӑ.

Ҫав икӗ паттӑр ӗнтӗ — Мининпа Пожарский — Чулхулари нумай нациллӗ халӑх ополченин пуҫне тӑнӑ.

Кузьма Минин халӑх ополченине хӗҫпӑшаллан-

тарас, тумлантарас, тăрантса усрас пĕтĕм ĕçе хăй çине илнĕ. Чулхулари посадски çынсен приговорĕ тăрăх «Минин посадски çынсем çине, сутăçсемпе ытти тĕрлĕ çынсем çине, вĕсен пурлăхĕсене кура (урăхла каласан — пурлăхăн виççĕмĕш е пиллĕкмĕш пайне), мĕн чухлĕ укçа хывмаллине палăртса тухнă». Пожарский сăмахĕсем тăрăх, Чулхула çыннисем укçа-тенкĕ хавассăнах панă, «хăйсен пурлăхĕсене шеллемен».

Ун чухнехи çынсем Мининăн ĕçне пысăк вырăна хураççĕ. Чулхула ополченинче тăракан çар çыннисем поход вăхăтĕнче яланах ăшă тумтирсемпе пулнă, вĕсене апат-çимĕçпе ытти хатĕрсем çителĕклĕ парса тăнă. Мининăн ĕçĕ çинчен летописец çапла çырать: «Хуласенче çар çыннисем тупать... вĕсен чĕрисене лăплантарать, вĕсене тумлантарать, çапла майпа пысăк çар пухать». Ун чухнехи çынсем те, летописец та уйрăмах — халăх ополченийĕ пĕр шухăшлă пулнине, ополченире «нимĕнле тавлашу та пулманнине» палăртаççĕ.

Вулакансем умне çакăн пек ыйту тухса тăма пултарать. Мĕншĕн-ха нихăш хула та мар, Чулхула халăх ополченийĕн центрĕ пулса тăнă? Çак ыйтăва хирĕç ответ парас тесен, акă мĕне ăнланса илмелле.

Çак çулсем хушшинче Чулхула, ытти хуласемпе танлаштарсан, питех инкек курман, ăна тăшмансем юхăнтарайман, Тушински вăрă кĕтĕвĕсем те ăна нимĕнле йывăрлăх та кӳреймен. Анчах малашне те лăпкă пурнăçпа пурнас тесен, сутуллĕве, промышленноçа анлăрах аталантарса ярас

тесен, хулари посадски сынсене, савăн пекех тата хресченсене те пĕтĕм çĕршывĕпе лăпкă пурнăç тăни кирлĕ пулнă, чи малтан — çĕршывра кирлĕ пек йĕрке тăни, авторитетлă правительство пулни кирлĕ пулнă. Ютçĕршыв захватчикĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ территорисенче посадски сынсемпе хресченсем епле асапланса пурăннине вĕсем аван курса тăнă. Ютçĕршыв захватчикĕсем вырăс халăхĕн чысне, тĕнне мăшкăл туни т. ыт. те — Чулхула сыннисем хушшинче çав захватчиксене хăвăртрах хăваласа ярас шухăшкăмăла ӳстернĕ. Çаксем пурте вĕсем Чулхулапа Чулхулари посадски сынсене иккĕмĕш халăх ополченийĕн пуçне кăларса тăратнă.

Чулхулара халăх ополченийĕ организациленни синчен илтсенех, çĕршывăн пур кĕтессисенчен те Чулхулана çар сыннисем пухăна пуçланă. Пуринчен малтан Чулхулана инçетри Смоленскран, Дорогобужран тата Вязьмăран служилăй сынсем пырса çитнĕ. Вĕсен отрядĕнче икĕ пин сын ытла пулнă. Вĕсем ĕнтĕ опытлă та вĕреннĕ боецсем пулнă, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен хулисене икшер сул хушши хӳтĕлесе сапăçура пиçĕхсе çитнĕ. Чулхула сыннисем вĕсене хавассăнах службăна илнĕ. Мускав хыçнелли çĕршывсенчи ытти хуласенчен те çар сыннисем пухăннă, пурте вĕсем тăван çĕршыва юратса кĕрешĕве хатĕрленнĕ. Çапла вара, майпенех хăватлă халăх ополченийĕ чăмăртанма тытăннă. Çак ополчени вырăс государствине ютçĕршыв захватчикĕсенчен тасатас ĕçре пит те пысăк вырăн йышăнса тăнă.



Дозорсем.

Чулхулара организациленекен ополчение посадски ҫынсем кăна мар, Атăл тăрăхĕнчи ял ҫыннисем те: чăвашсем, тутарсем, мордвасем, марисем — вырăссемпе пĕрле пулнă. 1611 ҫулти март уйăхĕнчех анатри хуласене: Улатăра, Шупашкара, Сĕвене, Хусана т. ыт. хуласене те «тĕнпе отечество тăшманĕсене хирĕҫ» пĕрлешсе кĕрешме чĕнекен грамота пырса ҫитнĕ. 1611 ҫулти апрель уйăхĕн вĕҫĕнче Атăл тăрăхне Устюгпа Пермь ҫыннисенчен Смоленск, Чулхула, Рязань т. ыт. хула ҫыннисем тăшмана хирĕҫ пĕтĕм халăха хĕҫпăшалланса тухма чĕнекен хут пырса ҫитнĕ. Ҫак грамотăна Шупашкарта та, Улатăрта та, Хусанта та, Сĕвере те илнĕ. Грамота пĕтĕм православнăй христиансене пĕр шухăшлăн пулса христиан тĕнĕпе Мускав государствине пулăшма чĕннĕ. Анатри хуласем: Шупашкар, Сĕве, Хусан т. ыт. пĕтĕм Атăл тăрăхĕнчи халăхпа пĕрле Чулхула ополченийĕнче паллă вырăн йышăнса тăни синчен Д. Пожарский хăй ҫырнă грамотара та лайăх палăртнă. Пожарский 1612 ҫулăн пуҫламăшĕнче Чулхуларан Вычегда хулине янă грамотасенчен пĕринче ҫапла каланă: «а эпир, Хусанпа тата анатри ытти хуласемпе ҫыхăннă хыҫҫăн ҫар ҫыннисем нумай пухса... Суздаль ҫывăхĕнче тăракан тăшман ҫыннисем сине каятпăр. Хусантан, Сĕверен, Шупашкартан, мĕнпур анатри хуласенчен пире ак мĕн ҫырса пĕлтереҫҫĕ: вĕсем пурте хăйсен пуҫлăхĕсемпе пĕрле земски службăна килеҫҫĕ (халăх ополченине тесе ăнланмалла. **П. Г.**),

Хусантан вара пирвайхи çынсене — стрелецсене хăйсен пуçлăхĕсемпе пĕрле пирĕн пата кăларса янă та ĕнтĕ, вĕсем часах пирĕн пата çитеççĕ».

Хусан, Шупашкар, анатри тата ытти хуласем Чулхула енче пулни халăх ополченине ертсе пыракансемшĕн пысăк вырăнта тăнă. 1612 çулти январь уйăхĕн пуçламăшĕнче Мининпа Пожарский Хусана ятарласах уйрăм посольство яни те çавăнтанах килнĕ (вăл посольство пуçĕнче Иван Биркин тăнă).

Тепĕр енчен тата Атăл тăрăхĕнчи çак хуласемпе килĕшни ополченине ертсе пыракансемшĕн çакăн пирки те паха пулнă: çакăн тăрăх вĕсем ютçĕршыв захватчикĕсене хирĕç кĕрешĕве вырăс государствин ытти хулисене: Вологдăна, Вяткăна, Перме т. ыт. те, унтан Çĕпĕре хутшăнтарма пултарнă. Вăл чăнах та çапла пулнине çакăнта илсе кăтартакан документран та аван курма пулать.

1611 çулти декабрĕн 20-мĕшĕнче Чулхула ополченине ертсе пыракансем Пермьпа Вятка хулисене çакăн пек хут янă: «Пур хуласем те Чулхулапа килĕшрĕç: анатрисем те, тинĕс çывăхĕнчисем те, Атăл тăрăхĕнчисем те, Рязань те килĕшрĕç, вĕсем Чулхулана хăйсен тупăшĕсене яраççĕ, вĕсем чăн тĕппе хăйсен чунĕсемшĕн çапăçса вилме те хатĕр».

Чулхула çыннисем йышăннă приговор тăрăх, Хусан таврашĕнчен килекен çар çыннисене тытса тăмашкăн ополчени руководителĕсем — Мининпа Пожарский — Мордвапа Çармăс салисемпе ялĕсенче пурăнакан патша аллинчи çынсем, борт-

нăйсем çине кашни килрен «4-шар четь» сĕлĕ тата утă илмешкĕн пĕрер тенкĕ —укçан пухмалла тунă. Çакă вăл Чулхулана апатри хуласенчен пысăк çар вăйĕ пынине кăтартать.

Шупашкар, Сĕве, Хусан, Улатăр т. ыт. хуласем, çĕнĕ движение — халăх ополченине организацилес ĕçе кăмăлланă, анчах хăшпĕр хуласем: Етĕрне, Кăрмăш, Арзамас малтанхи вăхăтра çав движени çине сиввĕн пăхнă. Çак хуласенчи воеводăсем хушшинче ĕлĕк Тушински вăрăпа пĕр майлă ĕçленĕ çынсем пулнă.

Октябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче ополчени организаторĕсем Атăл тăрăхĕнчи хуласене: Улатăра, Арзамаса, Кăрмăша, Етĕрнене, Шупашкара, Сĕвене, Хусана вырăнсенче пухнă çар вăйĕсене хăвăртрах Чулхулана ăсатма ыйтса хут янă. Çак грамотăна ответлесе Хусантан çапла çырнă: «Хусан государствинчи çынсем пурте: князьсем те, мурзасем те, тутарсем те, чăвашсем те, çармăссем те, вотяксем те Чулхулапа çыхăну тунă, Атăл тăрăхĕнчи мĕнпур хуласемпе: сăртрисемпе айлăмрисемпе те, сăртрисемпе айлăмри тутарсемпе те, айлрăмри çармăссемпе те эпир пурте пĕр канашлă, пĕрлĕхлĕ пулмалла, пирĕн Мускав государствишĕн те, Хусан государствишĕн çине тămалла, пĕр-пĕрне тивмелле мар, çаратмалла мар, никама та усал тума юрамасть, кам та кам çак тĕлĕшрен айăпа кĕрет, çавна вара, унăн айăпне кура, приговор тăрăх айăпламалла».

Çапла ĕнтĕ: Хусан халăхĕсем, вĕсем хушшинче: чăвашсем, марисем, тутарсем т. ыт. те, Чулхула-

па пӗр шухăшлă пулнă, пӗрлӗхлӗ ӗҫшӗн вăл ертсе пыни тăрăх кӗрешнӗ. Кунсăр пуҫне тата, Хусан халăхӗсем хăйсем хыççăн Пермь ҫыннисене те илсе пынă. Вăл чăнах та ҫапла пулнине ҫав тапхăрти историллӗ документсем ҫирӗплетсе кăтартаççӗ. 1611 ҫул варринче Хусантан Пермь хулине янă грамота «Россия государствине ишӗлтерекен тăшмансене хирӗҫ пӗр-пӗрипе пӗрлешсе кӗрешмелли» ҫинчен, «Пермь ҫар ҫыннисене халех Мускава пулăшма ямалли» ҫинчен астутарать. Ҫав хушăрах тата грамота Пермь ҫыннисене «пӗтӗм ҫӗршыв пӗр-пӗрипе юратса килӗштерсе, пӗрлешсе пурăнма, Хусан ҫар ҫыннисене пухса Мускава, боярсем патне, пӗтӗм ҫӗршывпа Мускав государствине тăшмансенчен, христиан тӗнне мăшкăл тăвакансенчен хăтармашкăн кайма» чӗнет. Тепӗр уйăхран, 1611 ҫулти августăн пуҫламăшӗнче Пермь ҫыннисем Хусан халăхӗ патне «окружной грамота» янă, вӗсем Хусан чӗнсе каланипе килӗшни ҫинчен пӗлтернӗ. Ҫав грамотăра вӗсем «пӗр-пӗрипе пӗрлешӳ туни ҫинчен, тăван ҫӗршыва чуралантаракан, чăн тӗне ҫӗмӗрекен ютҫӗршыв захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешме пулни ҫинчен тупа тунине» калаççӗ. Ҫак тӗслӗхсем пурте Атăл тăрăхӗнче пысăк событисем пулса иртни ҫинчен, хупăрласа илнӗ Мускава пулăшу хатӗрлени ҫинчен калаççӗ.

Чăваш халăхӗ Чулхула ополченине хутшăнса кӗрешни ҫинчен Д. Пожарский Кăрмăшри воевода патне хăй ҫырса янă грамотăсемпе ҫырусем уйрăмăнах яруççăн кăтартса параççӗ: вӗсене

Д. Пожарский 1611 çулăн вĕçĕнче çырнă. Чулхуларан Иван Темнов пушкарь урлă 1611 çулти декабрĕн 26-мĕшĕнче Елагин патне янă çырура çапла каланă: «Господин Смирнăй Васильевича (урăхла каласан — Елагина **П. Г.**), дворянсемпе бояр ачисене, пушкарьсене, стрелецсене, казаксемпе бортниксене, çĕнĕрен тĕне кĕнĕ турхансене (чăвашсемпе марисен нациллĕ феодалĕсем. **П. Г.**), тутарсене, чăвашсене, çармăссене, мĕнпур служилăй тата ахаль пурăнакан çынсене — Димитрий Пожарский, Василий Юдин салам яраççĕ». Малалла грамота, çар çыннисене хăвăртрах пухма, вĕсене васкавлăн Чулхулана яма ыйтать.

1612 çулти февраль уйăхĕнче Димитрий Пожарскипе дьяк Василий Юдин воеводăсем патне янă грамотăра анатри хуласенчи халăха: «пур ĕçре те Чулхулана итлеме, пур ĕçре те пурте пĕр çын пек Чулхулапа пĕрле пулма, ырă канашсем çинчен Чулхулана çырса пĕлтерме» хушнă. Кăрмăшри çар çыннисене: «дворянсене те, бояринсен ачисене те, стрелецсен сотникĕсемпе стрелецсене те, турхансене те, чăвашсене те, çармăссене те хăвăлех Чулхулана земски службине ăсатма» каланă.

Нимĕн иккĕленмелли те çук, Шупашкар, Сĕве хулисем, каярахпа вара Етĕрнепе Кăрмăш хулисем те, Чулхула ополченине Атăл тăрăхĕнчи хуласемпе çыхăнтарса тăракан тĕвĕ пулнă.

Чăвашсем хушшинчен атамансем те тухнă, вĕсенчен пĕри, Пуртас ятлăскер, Мининпа хăйпе çывăх паллашнă çын пулнă. Костылев писатель пĕлтернĕ тăрăх, çак Пуртас ятти пумай чăваш-



Дозорсем

семпе пĕрле Мускава ютçĕршыв захватчикĕсенчен хăтарассишĕн кĕрешнĕ*).

Çапла ĕнтĕ анатри хуласем ополчени руководителĕсен чĕнĕвĕсене кăмăлласах йышăннă, анчах çак кăмăла çавăрмашкăн Мининпа Пожарскин пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле пулнă.

XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче Атăл тăрăхĕнче лăпкă пулман. Вырăс государстви çумне тинерех çеç пĕрлештернĕ халăхсем — марисем, тутарсем,

* Костылев: Козьма Минин. Стр. 88, 171. Художественное издательство. Москва, 1939 г.

пушкӑртсем, чӑвашсем т. ыт. те, лӑпкӑ пурӑнман. Халӗ ӗнтӗ «Хусантан тата Сӗверен, Шупашкартан тата анатри мӗнпур хуласенчен», — тенӗ Пожарский патне 1611 ҫулти декабрь уйӑхӗнче янӑ грамотӑсенчен пӗринче, — вӗсем (урӑхла каласан — ҫак халӑхсем. П. Г.) хӑйсен мӗнпур ҫыннисемпе земски службӑна пыраҫҫӗ». Ҫар ҫыннисемпе пӗрле ҫав Атӑл тӑрӑхӗнчи хуласенченех Чулхулана «канаш тума» представительсем уйӑрса янӑ, вӗсемпе пӗрлех тата «хысна нумай» ӑсатнӑ.

Анатри хуласенчи халӑхсемпе ҫар ҫыннисем ярса ҫеҫ мар тата хысна ярса та пулӑшасси ҫинчен килӗшнӗ хыҫҫӑн, Пожарский Чулхулана ҫар ҫыннисем пухса яма ыйтса тури хуласене те: Ярославле, Кострома, Ростова, Суздале, Вологдана т. ыт. хуласене грамотӑсем янӑ. Чулхула ҫыннисем чи малтан, «хӑйсемпе пӗр канашлӑ пулма», иккӗмӗшӗнчен, «вӗсен канашӗнчен сивӗнсе уйӑрӑлса каймалла мар пулма» чӗннӗ. Ҫак чӗнӳре те ополчени руководителӗсем татах та татах: чӑн тӗне тытакан христиансене пӗр-пӗринпе юратса, килӗштерсе, пӗрлешсе пурӑнма, халичченхи хирӗҫӳсене манма кирлине паллӑ тӑваҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсем Мускав государствине ютҫӗршыв захватчикӗсенчен тасатас тесен, чи малтан, халӑх пӗрлешӗвӗ кирлине питӗ лайӑх ӑнланаҫҫӗ.

Ҫапла чӑмӑртанса пухӑннӑ ӗнтӗ иккӗмӗш халӑх ополченийӗ.

Ополченецсем Димитрий Пожарскине ырӑ кӑмӑллӑ пулнӑшӑн, хӑйсемшӗн тӑрӑшнӑшӑн юратнӑ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл ҫар дисциплинине ҫирӗп тыт-

нă. Пуринчен ытла ăна ирĕклĕхшĕн пыракан халăх движенине чунтан парăнса ĕçленĕшĕн юратнă.

Тĕрлĕ хуласенчен Чулхулана пырса тулнă халăха хĕçпăшаллантарнă, çар ĕçне вĕрентнĕ.

Пысăк вăй пухса ăна вăрçă ĕçне вĕрентсе çитерсен, 1612 çулти апрель уйăхĕн пуçламăшĕнче ополченецсем, Кинешмапа Кострома витĕр тухса, Ярославле пырса çитнĕ. Хула çыннисем нумайăшĕ, стариксемпе хĕрарăмсем, халăх çарне хирĕç пулса илмешкĕн хула хыçне нумай инçете тухнă. Ярославльре ополчени çарне питĕ пысăк хаваслăхпа йышăнса илнĕ. Ярославль çыннисем хăйсен пурлăхĕсене пĕрлĕхлĕ ĕç валли пухса панă. Ярославль хулинче ополченецсем 4 уйăха яхăн тăнă.

Ополчени Ярославль хулинче тăнă вăхăтра, çĕршывра йĕрке кӳртес, правительствăн центральнăй учрежденийĕсене, сăмахран, «Пĕтĕм çĕршыв советне» тăвас енĕпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Ополчени çулпуçĕсем Мининпа Пожарский çак тапхăрта ополченецсене çар ĕçне вĕрентнĕ, çĕнĕрен пырса тăракан халăхран çĕнĕ отрядсем тунă. Пĕр сăмахпа каласан, Ярославль хулинче тăнă вăхăтра ополчени пĕтĕмпех çар йĕркине кĕрсе çитнĕ. Халĕ ĕнтĕ Мускав çине походпа каймашкăн çар тата укçа-тенкĕ те çителĕклех пулнă.

Тăшмансем те çывăрман, вĕсем халăх ополчени хушшине хăйсен çыннисене ярса тăнă, ополченецсен речĕсене хавшатма, пуринчен ытла, ополчени çулпуçĕсене вĕлерсе, ополченине аркатса яма тăрăшнă. Ополченец-воинсем хăйсен çулпуçĕсене

мĕн пек юратни çинчен çак факт яруççăн кăтартса парать. Пĕррехинче Пожарский Ярославль хулинчи съезжий сурта çĕнĕ тупăсене пăхма пынă, — çав тупăсене Мускава ăсатма хатĕрленнĕ пулнă. Пўртре пит тăвăр пулнă. Пожарский алăк патĕнче чарăнса тăнă; çав вăхăтра пĕр ополченец уксахлакан князь патне пырса (Пожарский çав таранччен 1611 çулта Мускав патĕнче аманнă суранĕнчен сывалса çитеймен пулнă-ха) аларан тытса халăх хушшинчен çавăтса кăларасшăн пулнă. Çав самантра пĕр казак, заговорщиксем князе вĕлерме ятарласа янăскер, Пожарскине çĕçĕпе хырăмран чикме хăмсарнă, анчах тĕл лектерейм; унăн çĕççи Пожарскине çавăтса каякан ополченеца, Роман ятлăскерне, урараn тивнĕ. Пожарский малтан мĕн пулнине те чухласа илеймен, тăвăр пўртре мĕнле те пулин тавлашу тухрĕ пулĕ тесе шухăшланă. Анчах та Пожарскине йĕри-тавра сырса илнĕ халăх мĕн пулнине лайăх ăнланнă. Пожарский тавра халăх хăвăртрах ункăланса тăнă та, ăна хўтĕленĕ. Вĕлерме тапăнакан казака тытса суда панă.

Халăх ополчени çулпуçĕсем Ярославль хулинче тăнă чухне чылай кирлĕ решенисем йышăннă. Çав решенисене вырăс государствине хўтĕлес тĕлĕшпе йышăнса пурнăçа кĕртсе пымалла пулнă. Тĕслĕхрен, «Пĕтĕм çĕршыв совечĕпе» килĕшсе, Пожарский хăйĕн çарне Черкасский князьпе Пожарский-Лопата (Димитрий Пожарский пиччĕшĕн ывăлĕ) командипе тата ытти воеводăсемпе пĕрле, интервентсен çарĕсене хирĕç çапăçма янă; интер-

вентсем вӑл вӑхӑтра Углич, Суздаль, Владимир, Переяславль, Ростов, Кашин, Тверь хулисене, Троицко-Сергиевски монастыре т. ыт. йышӑнса тӑнӑ. Ҫак хуласене каялла туртса илнӗ хыҫҫӑн «Пӗтӗм ҫӗршыв советне» пӑхӑнса тӑракан территори чылаях сарӑлнӑ.

«Пӗтӗм ҫӗршыв совечӗ» туса хунӑ хыҫҫӑн Минина «Мускав государствин суйлавлӑ ҫынӗ» ятне панӑ, Пожарскине — «Пӗтӗм вырӑс ҫӗршывӗн суйлавлӑ воеводи» ятне панӑ.

«Пӗтӗм ҫӗршыв совечӗ» ячӗпе Мининпа Пожарский тинӗс ҫывӑхӗнчи, Атӑл тӑрӑхӗнчи ҫӗршывсене, Урал таврашӗнчи хуласене тата Ҫурҫӗрти ҫӗршывсене грамотӑсем ҫыра-ҫыра янӑ. Государство тытӑмӗн тӗрлӗ ӗҫӗсене йӗркелесе пымашкӑн уйрӑм приказсем организациленӗ, тӗслӗхрен, разряднӑй, поместнӑй т. ыт. Хӗҫпӑшал тӑвас ӗҫе пуҫарса янӑ, уйрӑмах, артиллерине вӑйлатма тӑрӑшнӑ. Мининпа Пожарский «Пӗтӗм ҫӗршыв совечӗпе» канашламасӑр нимӗнле решени те йышӑнман; «Пӗтӗм ҫӗршыв советне» ополчени ҫарӗн уезчӗсенчен суйланӑ чи лайӑх ҫынсем кӗнӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, халӑх ополчени ҫулпуҫӗсем, Мининпа Пожарский, ҫар ӗҫне ҫеҫ мар, пӗтӗм вырӑс ҫӗршывӗн тытӑмне те хӑйсен аллине илнӗ. «Пӗтӗм ҫӗршыв совечӗ» хӑйӗн ячӗпе вырӑс ҫӗршывӗнче судсене йӗркелесе тӑнӑ, наградӑпа наказани парассине татса панӑ, ҫӗнӗ хуласем лартас ӗҫе йӗркеленӗ, ҫав вӑхӑтрах тата мӗнпур укҫатенкӗ пухас ӗҫе пӑхса тӑнӑ.

Ҫав тапхӑрта Пожарский уйрӑмӑнах шведсен

интервенцийёнчен шикленерех панă. Российăри шалти ишĕрĕлӳпе усă курса — шведсем Россия территорине Тихвин, Новгород, Старая Русса, Нарва таранах ярса илнĕ, Псковпа Торопец хулисем çинелле пыма хатĕрленсе тăнă. Çавăнпа та Новгород çĕрĕсене хӳтĕлес ыйту та пысăккăн тухса тăнă. «Пĕтĕм çĕршывăн суйлавлă воеводи» Пожарский Белоозерона т. ыт. вырăнсене, Образцов воевода командипе, отрядсем янă.

Çĕршывра патриотизмла çĕкленӳ ӳссех пынă. Халăхăн сарлака массисем интервентсене хирĕç сиксе тăнă. Халăх ополченийĕ питĕ вăйланса кайнă. Хресченсен партизанла отрячĕсем ăçта килнĕ унта ютçĕршыв захватчикĕсен çарĕсем çине тапăннă, вĕсене çĕмĕре-çĕмĕре тăкнă. Халăх герсийĕсем патриотизмăн чаплă тĕслĕхĕсене кăтартнă.

Халăхăн чаплă героизмне кăтартса парса, пĕр Маскевич ятлă çын çакăн пек факт илсе кăтартать. «Вишенка ялĕнче эпир ватă хресчене тыткăмăр та, хамăра çул кăтартса пыма хушрăмăр; эпир Волок сывăхне пырса лекесрен шиклененттĕмĕр, мĕншĕн тесен унта тăшманăн вăйлă çарĕ тăнă (урăхла каласан — вырăс çарĕсем тăнă. **П. Г.**). Вăл пире Волокран (Волоколамскран. **П. Г.**) пĕр миля айкинерех ертсе пыраччĕ, çĕрле вара юриех унталла илсе пынă. Волокран эпир пĕр сухрăмра çеç пулнă мĕн, пирĕн телейлĕхе пире ун çинчен Руцкий пан систерчĕ... эпир хамăрах тăшман аллине пырса кĕме хатĕрленнĕ мĕн; вара



**Д. Пожарский Мускав ҫывӑхӗнчи ҫапӑҫура.**

хӑвӑртрах каялла тавӑрӑнтӑмӑр. Ҫул кӑтартса пыраканӑнне пуҫне касса татрӑмӑр».

Мининпа Пожарский ертсе пыракан халӑх ополченийӗ мӗн чухлӗ вӑйланса пынӑ, Заруцкий казак ҫарӗсем ҫавӑн чухлӗ вӑйсӑрланса пынӑ; казаксем Мускав ҫывӑхӗнче тӑнӑ, вӗсенчен пӗркасси Пожарский енне куҫса пынӑ. Заруцкий ҫарӗсем вӑйсӑрланнӑ пирки, Трубецкой ҫарӗсем вӑрҫмасӑр тӑнӑ пирки, ютҫӗршыв захватчикӗсем Мускав синелле ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен ҫарсем кӳрсе пынӑ. Халӗ ӗнтӗ хӑрушӑ самант килсе ҫитнӗ, вӑхӑта

кăшт та сая яма юраман. 1612 çулти август уйăхěнче Пожарский Ярославльрен тухса, Мускав çинелле кусма пуçланă, ополченецсен çарěнчен пěр пайне Ростова, Суздале т. ыт. хуласене резервăна хăварнă. Ополчени Мускав патнелле çывхарсах пынă. Августăн 22-мěшěнчен вара халăх ополченийě ютçěршыв захватчикěсен çарěсемпе тытăçма пуçланă. Сентябрьпе октябрь уйăхěсенче çапăçусем малтанлăха Мускав тавра, каярахпа вара Мускав хулинче те пулса иртнě.

Октябрěн 22-мěшěнче ополченецсем Китайгорода штурмласа илнě, октябрěн 26-мěшěнче интервентсен Кремльри темиçе пинлě гарнизонě, выçăпа аптăранă пирки, парăнса вырăс ополчени аллине тыткăна лекнě.

Ютçěршыв захватчикěсем XVII ěмěрте вырăс государствине хăйсен аллине ярса илме ăмсанни вěсемшěн çакăн пек ăраскалсăр вěçленнě ěнтě. Тăшмана çěмěрсе тăкнă, ăна вырăс çěршывěнчен хăваласа кăларса янă. Тăшман çарěсем икě хут йышлăрах пулнă пулин те, вěсен хěçпăшалсем ополченецсеннинчен нумай лайăхрах, йышлăрах пулнă пулин те, вырăс халăхě паттăрăн та хăюллăн çапăçса тăшмана парăнтарнă. Нимěç мастерěсем тунă артиллери те, венгерецсен кавалерийě те, нимěçсен тимěр тумпа витěннě пехоти те вырăс халăхě хирěç тăнине чăтма пултарайман, мěншěн тесен вырăс халăхě хăйěн тăван çěршывěн чыслăхěшěн, ирěклěхěшěн, никама пăхăнманлăхěшěн çапăçнă.

Халăх ополчени воинěсем те, вěсен çулпуçě-



Кузьма Минин Крымски брод патĕнчи çапăçура.

сем Мининпа Пожарский та, тăван çĕршывпа халăха чĕререн юратса пысăк героизмпа, пысăк паттăрлăхпа çапăçнă. Мускавра ютçĕршыв интервенчĕсене хирĕç çапăçнă чухне чи йывăр самантра Минин хăй темиçе çĕр çын илсе интервентсене хирĕç çапăçма ертсе пынă. «Суйлавлă çын», ополчение хăй пуçарса, организацилесе яраканскер, йывăр та татăклă самантра каллех хăйĕн хăюллăхне кăтартнă. Унăн пĕтĕмпе те виççĕр çын кăна пулнă, çав вăйпала вăл тăшман çине тылран пырса тапăннă. Хăйĕн отрячĕпе вăл ютçĕршыв захватчикĕсен икĕ рота салтак тăракан Крымски Двор (Крымски брод патĕнче) патне çĕмĕрсе пынă. Тăшманăн пĕр ротти — утлă çар, тепри — çуран çар пулнă. Мускав шывĕ урлă каçса, Минин вĕсем çине сасартăк тапăннă. Минин пырса тапăннине чăтаймасăр тăшман хăйсен лагерьне чакнă. Таракан тăшмана Минин хыçалтанах хăваласа пынă, тăшман лагерьне штурмлама тытăннă. Интервентсене татăклăн çĕнтерес ĕçре çак çапăçу нумай пулăшнă.

Мускав хулине ютçĕршыв захватчикĕсенчен тасатнăшăн Михаил Романов патша Кузьма Минина думнăй дворянин званине панă.

Мининăн малашнехи ĕçĕсемпе пурнăçĕсем çинчен эпир сахал пĕлетпĕр. 1615 çулта, патша вăхăтлăха Мускавран тухса кайсан, Мускав хулине «сыхлама» Минина хушса хăварнă. 1616 çулта ăна государствăн пысăк ĕçĕпе Хусана янă пулнă, унтан каялла Мускава таврăннă чухне вăл çул çинче вилнĕ.

Димитрий Пожарскине те думной боярин званине панӑ. Вӑл нумай вӑхӑт хушши Мускавра пурӑннӑ. Пожарский ютҫӗршыв посолӗсемпе чылай дипломатиллӗ калаҫусем туса ирттернӗ, ҫар енӗпе пысӑк ӗҫсем туса пынӑ. 1618 ҫулта вӑл Калугапа Можайск хулисене тӗреклетес тӗлӗшпе ӗҫленӗ. 1627—1628 ҫулсенче Ямской, каярахпа Суднӑй приказсен пуҫлӑхӗ пулса ӗҫленӗ, Новгородра воеводӑра ларнӑ. 1637 ҫулта Яуза шывӗ ҫинче вал тӑвас ӗҫе ертсе пынӑ, Рязань хулине тутарсен тапӑнӑвӗнчен хӳтӗленӗ.

1612 ҫул хыҫҫӑн та Д. Пожарский тӑшмансене хирӗҫ кӗрешес ӗҫре пӗр хут кӑна мар пысӑк героизм кӑтартнӑ. 1615 ҫулта Северски ҫӗршыв ҫине (хальхи Украина ССР) ютҫӗршыв захватчикӗсен (пан Лисовскин) шайкисем тапӑнсан, Михаил патша правительстви тӑшмана хирӗҫ кӗрешме каллех Пожарскине янӑ. Ҫапӑҫура вырӑссем ҫӗнтернӗ. Хӑшпӗр ҫар ҫыннисем, тӑшманӑн вӑйӗ пысӑкраххине кура, Пожарскине каялла чакма сӗннӗ. Вӑл вӗсене каланӑ вара: «Каялла чакиччен кунта вилсе выртни аванрах». Ҫар пуҫлӑхӗ ҫирӗп тӑнипе вырӑс ҫарӗ «Лисовскин нумай ҫыннисене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, нумайӑшне амантнӑ тата 300 ҫын тыткӑна илнӗ. Лисовский ун чухне пӗр ҫын та тыткӑна илеймен».

1618 ҫулта Польша королӗ Владислав Мускав ҫине походпа пынӑ чухне, патша воеводисем нумайӑшӗ тӑшман енне куҫнӑ. Пожарский яланхи пекех тӑван ҫӗршыв интересӗсемшӗн ҫирӗппӗн тӑнӑ. Украина ҫӗрӗ ҫине тӑшман пырса кӗрсен,

Калугăпа ытти хула çыннисем патша патне пырса шляхтичсене хирĕç кĕрешекен çара ертсе пыма никама та мар, князь-боярин Д. М. Пожарскине яма ыйтса тархасланă. Калуга патĕнче вăл каллех вырăс халăхĕпе вырăс çĕршывĕн интересĕсемшĕн мĕнле кĕрешмеллине кăтартнă.

Пожарский 1642 çулта, 64 çула çитсе, вилнĕ.

Çапла ĕнтĕ, аслă вырăс халăхĕ, 1242 çулта Чудское кӳлли çинче нимĕçсен йытă-рыцарĕсене çĕмĕрсе тăкнăскер, 1380 çулта Куликово хирĕнче хăйĕн хĕçпăшал вăйне тата патриотизмне кăтартнăскер, 1612 çулта çĕнĕрен хăйĕн тăван çĕршывне ютçĕршыв захватчикĕсен тапăнăвĕнчен çăлса хăварнă.

Мининпа Пожарский — вырăс государствине ютçĕршыв захватчикĕсенчен тасатас ĕçĕн чаплă организаторĕсем, полководецĕсем пулса, тăван çĕршывпа халăх умĕнче хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçланă.

Мининпа Пожарский халăха хытă шаннă, унăн паттăр вăйне, героизмне пĕлнĕ, вăл халăх тăван çĕршыва хӳтĕлес ĕçре юлашки тумлам юн юлмиччен кĕрешме хатĕррине шаннă. Захватчиксене хăваласа янă хыççăн халăх тата хытăрах чăмăртаннă, хăйĕн государствин чиккисене, унăн никама пăхăнманлăхне малашне те хыттăн хӳтĕлесе тăнă.

Ютçĕршыв захватчикĕсене хирĕç нумай вăхăта нынă тата йывăр кĕрешӳре аслă вырăс халăхĕпе Россия государствинчи ытти тăванла халăхсем хушшинчи çыхăну тĕрекленсе пынă. Вырăс го-



Мининпа Пожарский памятникӗ.

сударствине хӳтӗлессишӗн пыракан кӗрешӳре вырӑс халӑхӗпе пӗрлех, тутарсем, чӑвашсем, мордвасем, удмуртсем т. ыт. халӑхсем те пӗр ретре пулнӑ. Аслӑ Совет Союзӗн халӑхӗ паттӑр патриотсене— Мининпа Пожарскине—300 ҫул каялла пирӗн тӑван ҫӗршывпа халӑхӑн никама пӑхӑнманлӑхне, чысне йывӑр условисенче хӳтӗлесе хӑварнӑскерсене, тавтуса аса илет.

Совет халăхĕ гитлерла вăрă-хурахсене хирĕç аслă отечественнăй вăрçă вăрçнă кунсенче пирĕн аслă, геройла мăн-асаттесен—Мининпа Пожарскин — паттăр ĕçĕсем пире хаяр тăшмансене хирĕç кĕрешме хавхалантарса тăраççĕ.

Пирĕн халăх хăйĕн историйĕн пур тапхăрĕсенче те тăшмана, вăл темĕн пек вăйлă пулсан та, мяланах çĕнтернĕ. Çакăн синчен калать пире Мининпа Пожарский Чулхулара организациленĕ халăх ополченийĕн чаплă çĕнтерĕвĕ. Çакăн çинчен калать пирĕн çĕршывăн пĕтĕм историйĕ.

Пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн та ирсĕррĕн тапăннă нимĕç фашисчĕсен кун çулĕ кĕскелсех пырать. Тăшмана çĕмĕрсе тăкатпăр, çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать.



## КĔНЕКЕРЕ ТĔЛ ПУЛАКАН ĂНЛАНМА ЙЫВĂР СĂМАХСЕНЕ ĂНЛАНТАРСА ПАНИ

**Ландскнехт** — Польша панĕсене тара кĕрĕшнĕ нимĕç салтакĕсем; XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче вĕсене сутăнчăк салтаксем тенĕ.

**Рейтарсем** — Хĕвеланăç Европăра вăтам ĕмĕрсенче тара кĕрĕшнĕ утлăçар çыннисем. Çак тара кĕрĕшнĕ çар çыннисем поляксемпе пĕрле Суя Димитрийсен «çарĕнче» тăнă, XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче вырăс халăхне хирĕç вăрçнă.

**Боярсем** — вырăс феодалĕсем хушшинчи çӳлти сийре тăракан çынсем, пуян помещиксем.

**Пушкарьсем**— тупă тăвакан мастерсем тата Российăри XV—XVIII ĕмĕрсенчи артиллерист-салтаксем.

**Стрелецсем** — IV-мĕш Иван патша вăхăтĕнче организациленнĕ çарти салтаксем. Стрелецсен çарĕсене I-мĕш Петр патша вăхăтĕнче пăрахăçланă.

**Посадскисем** — XII—XVIII ĕмĕрсенче хулара пурăнакан халăх çыннисем. Посадскисем, тĕпрен илсен, мĕнле те пулин ремеслопа, хăшпĕр чухне суту-илӳ ĕçĕпе пурăннă. Хулара вĕсене пуян купецсем, боярсем, промышленниксем т. ыт. эксплоатацилесе пурăннă.

**Стольник** — патша килçуртĕнчи пĕчĕк служатель.

**Стряпчий** — суд ĕçĕнчи çын. Вăл хыснана кĕмелли парăмсене шыраса илес ĕçе сăнаса тănă; стряпчий должноçне XIX ĕмĕрте, 1864 çулта, суд реформине туса ирттернĕ хыççăн, пăрахăçа кăларнă.

**Вотчина** — помещик аллине ашшĕнчен куçнă поместье е тата патша е князь службăшăн халалласа панă çĕр.

**Воевода** — патша уйăрса лартнă çар руководителĕ. Воевода пĕтĕм влаçа хăй аллинче тытса тănă. Воевода вырăнче, ялан пекех, боярсем пулнă.

**Посол, Посольство** — ютçĕршывсене пĕр-пĕр ĕçпе яракан çын, çынсен ушкăнĕ. Российăна ютçĕршывсенчен посольствосем уйрăмăнах XVII-мĕш ĕмĕртен пуçласа йышлăн килме пуçланă.

**Летописец** — вăл е ку тапхăрта пулса иртнĕ историллĕ событисене çырса пыракан çын.

**Бортнăйсем, бортнăй ухожисем** — хурт-хăмăр ĕçĕпе пурăнакансем, хурт-хăмăр ĕçĕ. Хурт-хăмăр тытнăшăн хресченсен хыснана куланай тўлемелле пулнă, ăна «бортнăй куланайĕ» тенĕ.

**Четь** — пĕр-пĕр виçен тăваттăмĕш пайĕ, чĕрĕкĕ.

**Грамота** — ятарласа чĕнў парса янă çыру. XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче Вырăс государствин тĕрлĕ хулисене грамотăсем ярса ютçĕршыв захватчикĕсене хирĕç кĕрешмешкĕн пĕрлешме чĕннĕ. Грамотăсенчен нумайăшĕ захватчиксене хирĕç кĕрешмешкĕн халăх вăйне пухас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тănă.

**Турхансем**—чăвашсен феодалĕсем-помещикĕсем. Вĕсене воеводăсем ятарласа турхан грамотисем панă. Çав грамотăсене службăшăн панă («турхан улпучĕсем» т. ыт. те).

**Съезжая изба («пÿрт»)**—авалхи саманара иртсе-çÿрен начальниксене кĕрсе тухмалли çурт е участок пулнă.

**Приказсем** — вырăс государствинчи управленин уйрăм отраслисене сăнаса тăракан учрежденисем; вĕсем XVIII ĕмĕрччен тытăнса тăнă. Тĕслĕхрен, разряд приказĕ (çар ĕçне пăхаканни), ямской (ямшăк, почтă, çыхăну ĕçне пăхаканни), поместнăй (çĕр ыйтăвĕсемпе ĕçлекенни) т. ыт. те. Ун пек приказсем нумай пулнă.

**Думный дворянин** — государство ыйтăвĕсем тĕлĕшĕпе канашлусене хутшăнма пултаракан чин, дворянсем хушшинчи аслăрах çынсем.

**Думный боярин** — аслă боярин, вăл боярсен думинче хутшăнса ĕçлеме пултарнă.

**Крымски Брод** — Мускавра, Крымски кĕпер тĕлĕнче, пулнă. Çав тĕлте, 1612 çулта, вырăс çарĕсем, Минин ертсе пынипе, ютçĕршыв захватчикĕсене питĕ вăйлăн çĕмĕрсе тăкнă.

---

Редактор *И. Павлов-Пинер.* Техредактор *А. Т. Быков*

НТ 864. Подписано к печати 30-VI-42 г. Заказ № 279. Тир. 8000 экз. Об'ем 1,5 п. л.

Чебоксары, тип. № 1 Упр. полиграфпромышл. при СНК ЧАССР

Цена 60 коп.

П. Г. ГРИГОРЬЕВ

# МИНИН и ПОЖАРСКИЙ

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧУВАШ. АССР
Чебоксары — 1942